Пурнăҫа, ҫӗршыва юрат, тăван халăх мӗнпе чӗрӗ, ҫавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНӖН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАҪАЧӖ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаҫат 1931 ҫулхи июлӗн 9-мӗшӗнче тухма пуҫланă.* | N 44 (4613) | *1998 ҫулхи апрель (ака) уйăхӗн 22-мӗшӗ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Кӗскен

### Каллех хăнасем

Ял хуҫалăхне реформăласси мӗнле пынипе паллашас тата хăйсем патӗнче пирӗн опытпа усă курас тексенсен шучӗ чакмасть. Ҫапла, нумаях пулмасть районта каллех Заинск районӗн представителӗсем пулчӗҫ, хальччe ял хуҫалăх предприятийӗсен ертӳҫисем, ҫаплах Самар облаҫӗнчи Кушкă районӗн представителӗсем те килчӗҫ. Вӗсем пирӗн районти юлашки ҫулсенчи улшăнусене пысăк хак пачӗҫ.

### Паломниксем киле таврăнчӗҫ

**Эсир пӗлетӗр пуль ӗнтӗ, Саудовски Арави королӗ сăваплă Мекăна турра пуҫҫапма кайма чӗннӗ Тутарстанта пурăнакан 200 ҫын шутӗнче пирӗн район представителӗсем те пулнă. Апрелӗн 14-мӗшӗнче вӗсем киле таврăннă. Делегаци ертӳҫи - район администрацийӗн аппарачӗн ертӳҫи Ф.М.ГАЛИМОВ ҫапла каласа парать:**

- Арави ҫӗрӗ ҫинче пире питӗ ăшшăн кӗтсе илчӗҫ. Эпир Сафа тата Марва хулисенче, Мина, Арафат, Муззафина айлăмӗсенче пултăмăр.

Пирӗн республика, район ертӳҫисене пире сăваплă вырăнсенче пулса курма май панăшăн тав тăватпăр. Хамăн 60 ҫулхи юбилей умӗн ку маншăн пысăк парне пулчӗ.

### Пӗлсе тăма

Республикăри Астăвăм кӗнекин редакцийӗ Аслă Отечественнăй вăрҫăра хыпарсăр ҫухалнă салтаксен Нурлатра пурăнакан ҫывăх тăванӗсене Астăвăм Кӗнекине район администрацийӗн ҫуртӗнче (1-мӗш хут) илме чӗнет.

## Хисепе тивӗҫлӗ



*Сабирзян Файзутдиновпа (сулахайра) Рафаэль Аглетдинов - кооперативсен "Игенче" пӗрлешӗвӗнчи хисеплӗ ҫынсем. Вӗсем пурнăҫӗ тăршшӗпех техникăпа вăй хунă, ҫавăнпа та вӗсене механизаторсем уйрăмах хисеплеҫҫӗ. Мӗншӗн тесен илсе килнӗ техникăн моторӗсем чи малтан ҫак ăстаҫăсен аллисене лекеҫҫӗ. Тракторсене ҫурхи ака тӗлне хатӗрленӗ вăхăтра вӗсем валли уйрăмах ӗҫ нумай.*

*Н.Азизов сăнӳкерчӗкӗ.*

## Хире тухас умӗн

***Хире тухиччен шутлă кунсем юлчӗҫ. Ҫак кампание кашни служба хатӗрленет, пӗрисем требованисем лартаҫҫӗ, теприсем пулăшу пама хатӗрленеҫҫӗ, виҫҫӗмӗшӗсем - ыйтусене пӗрле татса пама шутлаҫҫӗ. Малалла калаҫу ҫакăн ҫинчен пырать.***

### Требованисем тӗлӗшпе

**Т.Г.Соренкова, ЦГСЭН врач эпидемиологӗ.**

- Уй-хирсенчи ҫурхи ӗҫсем тытăниччен кашни механизаторăн профосмотр иртмелле. Ку пирӗн кашни ҫулхи требовани. Шел, анчах Элметпе Мамăк участоксенчи больницăсенче ҫак ӗҫе пуҫăнман та-ха. Кивӗ Чаллăри больницăра механизаторсен 38 проценчӗ ҫеҫ пăхăннă, Андреевкăра, хресченсен хуҫалăхӗсен "Киклӗ" ассоциацийӗнче ҫак кăтарту 22-24 процент.

Ҫав вăхăтрах хресченсен хуҫалăхӗсен Кузнецов ячӗпе хисепленекен, "Кондурча", "Заря", "Игенче", "Дуслык" ассоциацийӗсенче ҫак ӗҫе лайăх пурнăҫлаҫҫӗ. Вăрлăхсене инкрустацилессине хутшăнакан хӗрарăмсене суйласа илнӗ чухне кирлӗ правилăсене пăхăнмаллине палăртса калатпăр.

### Пулăшу ҫинчен

**М.М.Шагидуллин, районти ял хуҫалăхӗпе апат-ҫимӗҫ управленийӗн кадрсемпе ӗҫлекен экономисчӗ.**

- Хулапа район администрацийӗн ятарлă решенийӗпе килӗшӳллӗн уй-хирти ҫурхи ӗҫсен тапхăрӗнче ял ҫыннисене хула ҫыннисем пулăшу парассине пăхса хăварнă. Ҫак тӗллевпе кăҫал хулари предприятисемпе организацисенчен ялсене 43 трактор тата 64 механизатор ярӗҫ. Кунсăр пуҫне, механизаторсене 99-мӗш ПУри аслă курссенче вӗренекенсем пулăшӗҫ, вӗсем механизаторсене улăштаракансем е акакансем пулса вăй хурӗҫ. Ҫаплах уй-хирти ҫурхи ӗҫсем тӗлне Чистайри совхоз-техникумра аслă курссенче вӗренекен хамăрăн 15 студента кӗтетпӗр.

99-мӗш ПУри виҫӗ уйăхлăх курссене ҫак кунсенче пӗтерсе, ятарлă удостоверенисем илнӗ 70е яхăн ҫамрăк та пулăшасса шанатпăр. Ҫакă пулăшу парассин программи, хирти ӗҫсем пуҫлансан улшăнусем пулаҫҫех ӗнтӗ, ҫавăнпа та эпир тата хушма пулăшу хатӗрлетпӗр.

### Цехӗ те, ăстаҫисем те хамăрăн

Нумаях пулмасть пирӗн хуҫалăхра ҫӗвӗ цехӗ ӗҫлеме тытăнчӗ. Кунта Наташа Гайфуллина, Роза Ибрагимова тата Рамзия Фатыхова ăстаҫăсем вăй хураҫҫӗ. Хуҫалăх ӗҫченӗсем валли вӗсем ятарлă тумтир, алсишсем ҫӗлеҫҫӗ. Халӗ ҫӗвӗҫӗсем дояркăсем валли халатсем ҫӗлеҫҫӗ. Кунта заказ парса ҫӗлеттерме те пулать. Ҫапла, ялта питӗ кирлӗ те усăллă тепӗр цех ӗҫлеме тытăнчӗ.

**З.ИСМАГИЛОВА.**
**Хресченсен хуҫалăхӗсен "Татарстан" ассоциацийӗ.**

## Каллех декларацисем ҫинчен, хальхинче - пӗтӗмлетӳсем

***Апрелӗн 1-мӗшӗнче 1997 ҫулхи тупăшсене декларацилессипе ҫыхăннă кампани вӗҫленчӗ. Кăҫал вăл мӗнле иртнӗ-ши? Ҫак ыйтăва эпир Патшалăх налук инспекцийӗн Нурлат районӗн инспекторне Л.Х.ТИМЕРБУЛАТОВАНА патăмăр.***

- Кашни ҫулхи пекех тупăш декларацийӗсене парасси юлашки кунччен тăсăлчӗ.

Ҫак кунсенче инспекци ӗҫченӗсене уйрăмах йывăр пулчӗ. ГНИн Нурлат районӗнчи инспекцине 605 деклараци тăратнă, ҫав шутра юридици енчен йӗркеленмен предпринимательсем пек регистрациленӗ 395 ҫын тата темиҫе ҫӗртен тупăш илнӗ 210 ҫын.

1997 ҫулхи тупăшсем ҫинчен ҫырнă декларацисенчен илнӗ налукăн пӗтӗмӗшле шучӗ 1 миллиард та 828 миллион тенкӗ (1997 ҫулхи палăртнă хакпа). 1997 ҫулшăн илнӗ декларацисем тăрăх хушса тӳлемелли сумма 237 миллион тенкӗ.

Тупăш тăрăх илекен налука каялла тавăрса памалли декларацисем те пур - вӗсен хушшинче уйрăм ҫуртсем, сад ҫурчӗсем тăвакансем, строительство материалӗсем тата ыттине те илнине документсемпе ҫирӗплетекен тăкаксем ҫинчен пӗлтерекен справкăсем тăратнăскерсем,вӗсем РФ "Уйрăм ҫынсенчен тупăш тăрăх илекен налук ҫинчен" законне тӗпе хурса, уйăхри чи пӗчӗк ӗҫ укҫин 5000 виҫи чухлӗ ҫăмăллăхсемпе усă кураҫҫӗ. Бюджетран тавăрса памалли сумма 95 миллион тенкӗ (1997 ҫулхи палăртнă хакпа) шутланчӗ.

Апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне 1997 ҫулхи тупăш ҫинчен деклараци тăратнă ҫынсемпе пӗрле юридици енчен йӗркеленмен предприниматель пек регистрациленӗ, тӗп ӗҫ вырăнӗ пур (ӗҫ кӗнеки упранакан вырăн) е тӗп ӗҫ вырăнӗ ҫуккисем, ГНИе деклараци тăратма пыман ҫынсем те пур. Вӗсем тӗлӗшпе Законсене тӗпе хурса чи пӗчӗк ӗҫ укҫин 5 виҫи чухлӗ администраци енчен штраф параҫҫӗ, ҫаплах тупăш тăрăх илекен налукăн 10 процентне шыраттарса илмелли финанс санкцийӗпе усă кураҫҫӗ.

Унсăр пуҫне, юридически енчен йӗркеленмен предприниматель пек регистрациленӗ ҫынсем, налук тӳлессинчен пăрăнакан, ӗҫлеме пултарайман, отчетсене вăхăтлă параймансkерсем тӗлӗшпе, вӗсене предприниматель ӗҫне илсе пыма ирӗк паракан свидетельствăна туртса илме ходатайство паратпăр.

## «Савăнăҫ оди»

***Нумаях пулмасть Нурлатри музыка шкулӗнче вӗренекенсемпе преподавательсем Санкт-Петербург хулинче пулнă, унта вӗсем Пӗтӗм тӗнчери ачасен музыка фестивальне хутшăннă. Ачасен музыка шкулӗн директорӗпе Т.С.Бадыгинпа тӗл пулса, эпир унран фестиваль мӗнпе асра юлни ҫинчен каласа пама ыйтрăмăр.***

- Пӗтӗм тӗнчери ачасен "Савăнăҫ оди" музыка фестивалӗнче тӗрлӗ конкурссем иртттерме палăртнăччӗ. Сăмахран, "Пиччӗшӗпе йăмăкӗ", "Эпӗ - композитор", "Раҫҫей композиторӗсем - ачасене" конкурссем 9-мӗш хут иртрӗҫ. Эпир "Пиччӗшӗпе йăмăкӗ" фортепьяно дуэчӗсене хутшăнтăмăр, кăҫал ăна тăваттăмӗш хут йӗркеленӗ. Конкурса Н.Г.Захарова ертсе пыракан фортепьяно класӗнче вӗренекенсем аппăшӗпе йăмăкӗ Эльмирапа (10 ҫул) Альбина (8 ҫул) Хамматвалеевасем хутшăнчӗҫ.

Фестивале тӗрлӗ ҫӗршывсенчен 100 ытла дуэт пуҫтарăннăччӗ. Сăмахран, Америкăран, Израильтен, Болгарирен, СНГ ҫнршывӗсенчен те представительсем пурччӗ. Ҫавăнпа та пирӗн малтанхи вырăнсене йышăнасси ҫинчен шухăшламалли те ҫукччӗ. Ҫакăн пек масштаблă мероприятие хутшăннине те эпир хамăршăн пысăк чыс тесе шутлатпăр. Пирӗн хӗрачасем хутшăннă кӗҫӗн ушкăнра 40 мăшăр хушшинче пӗрремӗш вырăна никам та йышăнаймарӗ, иккӗмӗш вырăна Белоруссири музыка академи ҫумӗнчи музыка колледжӗнче вӗренекенсем тата Ригăри ҫавăн пек учрежденин музыка шкулӗн представителӗсем ҫӗнсе илчӗҫ, виҫҫӗмӗш вырăна Хусанти консерватори ҫумӗнчи ятарлă музыка шкулӗн воспитанникӗсем тивӗҫ пулчӗҫ.

Паллах, фестивале хутшăнни пирӗншӗн питӗ пысăк пӗлтерӗшлӗ, вăл нумайччен пирӗн асра юлӗ. 10 куна палăртнă программа питӗ пуянччӗ, ҫавăнпа та мӗнпур концертсене хутшăнма май пулмарӗ. Консерваторире кашни кун гала-концертсем пулчӗҫ. Филармонире те пулса курма тӳр килчӗ, унта пӗрремӗш хут Шостакович произведенине илтме тӳр килчӗ. Ҫавăнпа пӗрлех хулана хăйне те курас тата унти паллă вырăнсемпе - Исааковски соборӗпе, Эрмитажпа, храмсемпе паллашас килчӗ. Кӗскен каласан, иртен тытăнса каҫ пуличчен ҫӳрерӗмӗр.

Фестивальте туслă та ăшă лару-тăру хуҫаланни ҫинчен уйрăммăн каласа хăварас килет. Музыка шкулӗнче эпир виҫӗ кун репетици иртттертӗмӗр, ҫав вăхăтра пире автобус илсе килетчӗ, кайран леҫсе хăваратчӗ. Жюри членӗсемпе хула ҫыннисен ыркăмăллăхӗ те пире питӗ тӗлӗнтерчӗ. Петербургри фестиваль масштаблăхӗпе тата пӗлтерӗшӗпе пирӗн, ҫаплах ачасен музыка тавракурăмне чылай пуянлатасса шанатăп.

# Калаçу усăллă пулчĕ

**Пĕлетĕр ĕнтĕ, апрелĕн 2-мĕшĕнче Тутарстан Республикин Премьер-министрĕпе Ф.Х.Мухаметшинпа тĕл пулма Куйбышев чугун çул начальникĕ А.С.Левченко килнĕччĕ. Ку темăпа çĕнĕрен хускатас тĕллевпе эпир ун чухне хаçатри публикацире "чугун çул ĕçченĕсемпе çыхăннă ыйтусене татса парасси" сăмахсемпе çырлахрăмăр. Калаçу вăхăтĕнче вара, сехет ытла тăсăлнăскерте тата хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн Ф.С.Сибагатуллинăн пӳлĕмĕнче иртнĕскерте, Нурлатри чугун çул станцине тивекен ыйтусене çеç мар, хулашăн, районшăн, çаплах республикăшăн кирлисене хускатнă. Эпир Нурлатри чугун çул станцийĕн начальникĕнчен Л.Н.ГАЗИЗУЛЛИНАРАН патшалăх шайĕнче иртнĕ калаçу çинчен каласа пама ыйтрăмăр.**

**Пысăк шайри тĕлпулусем**

- Чи малтан эпир çак калаçăва кĕтнине, ăна шанса тăнине палăртса хăвармалла. Мĕншĕн тесен ыйтăва татса парассине вăраха тăсма юрамасть, малашнехи пурнăç та çавăнтан килет. Калаçу икĕ пысăк ыйтăва татса парасси çинчен пырать: пĕрремĕшĕ - Нурлатри чугун çул станцине экономика тĕлĕшпе ирĕклĕх парасси тата иккĕмĕшĕ - парăмсене тӳлесе татма çул-йĕр пĕрле шырасси. Чугун çул ĕçченĕсене чи малтан юлашки ыйту хумхантарать пулсан, пĕрремĕшне татса парассинче пуçаруçăсем Премьер-министрпа администраци пуçлăхĕ пулчĕç.

**- Çакăн çинчен тĕплĕнрех каласа параймăр-ши?**

- Пирĕн Нурлат станцийĕ Куйбышев чугун çулĕн Ульяновск уйрăмне пăхăнса тăрать. Эпир регионта, станцире ĕçсем мĕнле пынишĕн, социаллă пурнăç ыйтăвĕсене татса парассишĕн яваплă, анчах та финанспа экономика тĕлĕшĕнчен пăхăнса тăни чылай пуçарусене пурнăçлама май памасть. Хамăр счет, бухгалтери çуккипе эпир клиентсемпе тӳррĕн расчет тăваймастпăр (ку та вăхăтра тӳлесе татманнин сăлтавĕсенчен пĕри шутланать). Çакна пула пирĕн подразделенисем те тăкак тӳсеççĕ. Çапла, депо филиалĕн ертӳçисем Ульяновскра вырнаçнă пулсан, чугун çул ОРСĕн - Пĕкĕлмере, путеецсем Димитровграда пăхăнса тăраççĕ.

Тата тепĕр тĕп самант - налуксем. Çӳлерех асăннă сăлтавсене пула пире налуксене аяккине тӳлеме тӳр килет. Эпир хулана та, района та усă памастпăр тесе администраци пуçлăхĕ тĕрĕс калать. Республика налука "прописка" вырăнĕнче тӳлемелли политика илсе пырать.

Çакна аргумент вырăнне кăларса тăратса, Ф.Х.Мухаметшинпа Ф.С.Сибагатуллин чугун çул начальникĕ умне пирĕн станцие хăй тĕллĕн ĕçлеме май парас ыйтăва тăратрĕç. Анатолий Степанович ку аргументсемпе килĕшмесĕр пултараймарĕ, ыйтăва тĕплĕн тишкерсе тухса икĕ еншĕн те усăллă татса пама шантарчĕ.

Сăмах май каласан, администраци пуçлăхĕ экономика тĕлĕшĕнчен ирĕклĕ пулни тата налуксем çинчен тахçанах калаçать. Ноябрь уйăхĕнчен пуçласа эпир çĕр налукне вырăнти бюджета тӳлеме пуçларăмăр. Апрель уйăхĕн вĕçĕнче пурлăх налукне тӳлессине те çапла татса парĕç. Калаçăвăн тĕп темине - ыйтусене татса пани пуриншĕн те усăллă пулнине тепĕр хут палăртас килет.

**- Вăхăтра тӳлесе татманни çинчен каласан вара...**

- Чи малтан ку пулăм пирĕн станцие çеç тивмест, чугун çулĕ çинче пĕтĕмпех çапла. Сăлтавсем пур ĕнтĕ, анчах та ку лару-тăрăва лайăхлатмасть. Хальхи вăхăтра пирĕн 7 миллион тенкĕ яхăн дебитор парăмĕ шутланать.

Çапла, "Н-Октябрь элеваторĕ" АО 900 пин тенкĕ парăмра, сахăр завочĕ - 500 пин тенкĕ, "Нурлатнефть" НГДУ-600 пин тенкĕ, çул-йĕр тăвакансем - 160 пин тенкĕ. Çул-йĕр тăвакансем (çаплах "Сельхозхими" тата керамзит гравийĕн завочĕ) çăмăллатнă тарифсемпе усă кураççĕ. Анчах та парăмсене пайăн-пайăн тӳлеме те пулаччĕ вĕт-ха. Анатолий Степанович та çапла шутлать. Ертӳçĕсем пире нефть, тырă, бентонит тăмĕ тиеме, удобренисене, вăрлăхсене, сахăр чĕртаварне пушатма ирĕк параççĕ, ку сахал мар вĕт-ха. Калаçу усăллă пулни паллă, çапла январь-февраль уйăхĕсенче тиевсене тиесе ăсатасси 100-120 тонна çити чакнă пулсан, апрель уйăхĕнче ĕлĕкхи шаях çитрĕ - 800 тонна. Керамзит гравийĕн завочĕ хăй налукне тӳлесе татрĕ, элеватор, сахăр завочĕ, нефтяниксен ертӳçисемпе çак ыйтăва татса парассинче пĕр чĕлхе тупрăмăр.

**- Любовь Никифоровна, тĕлпулу ăнăçлă иртрĕ тесе хак паратăр-и?**

- Паллах. Калани çумне тата акă мĕн хушасшăн: А.С.Левченко чугун çул поселокĕнчи 40 лет Октября, Пионерская урамĕсене газификацилеме 2,5 миллион тенкĕ уйăрса пама, котельнăя çутçанталăк газĕпе çыхăнтарма пулăшма сăмах пачĕ. Станцин малашлăхĕ çинчен те калаçу пулчĕ. Кăна ĕнтĕ паллах, тӳрех татса пама çук.

**С.ХАЙРУЛЛИНА**
**калаçнă.**

# Пурнăç çулне тĕрĕс суйласа илмелле

Ашшĕ-амăшĕсене кашнине хăçан та пулин çак ыйту хумхантарать: унăн ачи шкултан вĕренсе тухнă хыççăн кам пулĕ? Аслă классенче вĕренекенсем хăйсем те нумай пĕлеççĕ пулин те, пурнăç çулне суйласа илнĕ вăхăтра вĕсене аслисен пулăшăвĕ, канашĕ кирлĕ. Вăхăт улшăннине пăхмасăр, шкул профориентаци ĕçне ирттерессишĕн явап тытать. Çапла, нумаях пулмасть Тури Нурлатри вăтам шкулта педагогика коллективĕн, вĕренсе пĕтерекенсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсен тĕлпулăвĕнче ачасен малашнехи пурнăçĕнчи улшăнусем, йывăрлăхсем çинчен калаçу пычĕ.

Кăçал пирĕн шкула 8 çын вĕренсе пĕтерет. Районти, республикăри кăтартусемпе танлаштарсан, ку сахал, анчах та калаçу 8 çын шăпи çинчен пырать вĕт-ха. Ачасен пĕр пайĕ вĕренӳ заведенийĕсене малалла вĕренме кĕрес тет, теприсем хуçалăхра юласшăн, хăшĕсем вара промышленность отраслĕнче вăй хума шутлаççĕ. Анчах та 11-мĕш класра вĕренекенсем хăйсем кăмăллакан аслă вĕренӳ заведенийĕсене пурте вĕренме кĕме пултарайманни паллă, çакăн пек ачасен малашлăхĕ уйрăмах хумхантарать. Тĕлпулура çакăн çинчен те калаçрăмăр. Ашшĕ-амăшĕсемпе ачасене анкетăсем çыртарнă хыççăн çемьесенче малашнехи профессие суйлас тĕлĕшпе калаçу пыни паллă пулчĕ. Ачасемпе ашшĕ-амăшĕсен кăмăлĕсем пĕрпек пулни палăрчĕ. Çапла, хуçалăхра 20 çул ытла механизатор пулса вăй хуракан Наильпе сахăр кăшманĕ ӳстерекен Нурания Гимадиевсем кĕçĕн хĕрĕ Лейсан хĕрарăма кирлĕ - повар профессине суйласа илнине ырлаççĕ. Фаниспа Рафик Мулюковсем аслă хĕрне Рузиляна амăшĕнчен тĕслĕх илсе, повар пулма сĕнчĕç.

Галлямов ывăлне, Руслана, хăйĕн пек электрик пулма сĕнчĕ, анчах пĕрле канашланă хыççăн ывăлĕ строитель пулма шухăш тытрĕ. "Руслан вĕренме кĕричченех практика иртет, çемье валли çурт тăвать", - кулать амăшĕ.

Галияпа Шамсутдин Мусинсен кĕçĕн ывăлĕ те строитель профессине суйласа илесшĕн.

Наци кĕрешĕвĕпе республика ăмăртăвĕсенче малти вырăнсенчен пĕрне çĕнсе илнĕ Руслан Кабиров вара хăйĕн малашлăхĕнче спортсăр пултараймĕ. Ашшĕ-амăшĕ те унăн шухăшĕпе кăмăллă.

Инçе рейссене çӳрекен Равиль водительпе Роза Муртазина сутуçă хăйсен ача чухнехи ĕмĕчĕсене пурнăçланă иккен, Сирень хĕрĕ учитель пулас тенĕ шухăша ырлаççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсенчен кашни хăйсен вырăнĕсенче тӳрĕ кăмăлпа вăй хурать, çакна хисеп грамотисем, медальсем те çирĕплетеççĕ. Вĕсем тухса калаçнинчен аслисем хăйсен профессийĕсемпе кăмăллă пулни, вĕсен начар тата лайăх енĕсене пытарманни паллă пулчĕ, анчах вĕсем пĕри те йывăрлăхсем пирки ӳпкелешмерĕç. "Малашне хăть те мĕнле професси суйласа илсен те лайăх çын пулма тăрăшăр", - тесе канаш пачĕ Галия аппа. Унтан вĕренекенсем концерт кăтартрĕç, вăл пурне те килĕшрĕ. Кайран вара амăшĕсем пĕçерсе килнĕ кукăльсемпе пурте чей ĕçрĕç, ăшшăн калаçса ларчĕç.

Ачасене малашне экзаменсем кĕтеççĕ. Эпир вĕсене ăнăçлăхсем сунатпăр. Ан тив, вĕсен ĕмĕчĕсем яланах пурнăçа кĕрсе пыччăр.

**Н.ТУХВАТУЛЛИНА,**
**Тури Нурлатри вăтам шкулти ертӳçĕ-учитель.**

*Хумхантаракан çыру*

# Эпир аяккинче юлтăмăр...

Сирĕн пата К.Маркс проспектĕнчи 1-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакансем çыраççĕ. Пирĕн çуртăн йывăрлăхĕсем çинчен эпир пĕрре çырнăччĕ ĕнтĕ. Анчах та пысăк улшăнусем курăнмаççĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн çурт 50 лет Победы микрорайонĕнче çутçанталăк газĕ кĕртмен пĕртен-пĕр çурт. Хăй вăхăтĕнче 1-мĕш ПМК строителĕсем çак çурта газ кĕртмесĕрех хута янă, пирĕн вара халь строительсене пула нушаланмалла. Пĕлтĕр çак ыйтупа эпир район администрацийĕнче те пулнăччĕ. Пире тата администрацие ярса панă хуравра, хулан ун чухнехи мэрĕ Ф.Гайнуллин алă пуснăскерте, 1997 çулхи апрель уйăхĕнче газ пама шантарнăччĕ. Чăнах та, март-апрель уйăхĕсенче "Татспецстрой" организаци пирĕн çурта тата ветерансен çуртне газификацилес ĕçе питĕ активлă пуçăнчĕ. Çулла кӳршĕ çурта çутçанталăк газĕпе çыхăнтарчĕç (çав вăхăтрах Шашин урамĕнчи 27-мĕш номерлĕ çурта та газификациленĕ иккен). Эпир вара аяккинче тăрса юлтăмăр. Пирĕн çурта мĕншĕн хăварнă-ши тесе "Татспецстройра" интересленсен, вĕсем пире çапла хуравларĕç: "Сирĕн заказчик МПП, вĕсем вара укçа куçармаççĕ. Тӳлесе татсан тӳрех ĕçсене вĕçлетпĕр", терĕ Г.Н.Бикинеев начальник. МПП начальникĕн А.Гайнуллинăн хуравĕ тата та кĕске пулчĕ: "Укçа çук". Вăхăт нумаях та иртмерĕ, МПП лару-тăруран тухма "май" тупрĕ, газификациленĕшĕн 2 миллион тенкĕ ытла тӳлемелле иккен. Паллах ĕнтĕ, çак çуртра пурăнакансем килĕшмерĕç. Çак ыйтупа инстанцисем тăрăх тепĕр хут çӳреме тытăнсан, газификацишĕн тӳлеве 1200 пин тенке çити чакарчĕç. Эпир тĕлĕнетпĕр: мĕншĕн-ха пирĕн çуртра пурăнакансем тӳлемелле? Инстанцисенчен пĕринче те çак ыйтусем çине никам та ăнлантаруллă хурав параймарĕ, пирĕн çырусем вара хуравсăрах юлаççĕ. Эпир уйрăм çуртра пурăнмастпăр вĕт-ха, МПП балансĕ çинче. Тен, хаçат урлă мĕнле те пулин хурав парĕç.

**Карл Маркс проспектĕнчи 1-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакансем.**

**Редакцирен:** **Эпир çак ыйту çине МПП ертӳçисенчен хурав кĕтетпĕр, лару-тăрăва татса панине хаçата вулакансене те пĕлтерĕпĕр.**


## ПĔЛТЕРӲ

2500х1250 калăпăшлă тимĕр листасем сутатпăр:
- цинкланă тӳрĕ - 74 тенкĕ;
- цинкланă "хумлă" - 80 тенкĕ;
- вĕрилле сарнă 2 мм хулăнăш - 150 тенкĕ;
3 мм хулăнăш - 200 тенкĕ;

Хакне йӳнетме, укçасăр расчет тума май пур. Чугун çул котельнăйĕнче ыйтса пĕлме пулать. Телефонсем: 2-15-89, 2-13-69, 9 сехетрен пуçласа 15 сехетчен шăнкăравламалла. Лицензи номерĕ 202622.

## Улах юррисем

# Çакăн чухлĕ пĕве эп ӳстертĕм

Чикмекпеле çӳле, ай, улăхрăм,
Ял-ял урлă Чистая курас пек.
Çакăн чухлĕ пĕве эп ӳстертĕм,
Темĕн чухлĕ ырлăх курас пек.

Иккĕех курница хире-хирĕç -
Кăвакарчăн лармасть-мĕн тăвас?
Ывăл пулмарăмăр, хĕр пултăмăр,
Атте-анне савмасть, мĕн тăвас?

Вăрмана та кайрăм, ай, каç турăм,
Вĕрене çулçинчен хӳшĕ турăм.
Хӳшше хура чĕкеç, ай, кĕмерĕ
Сар кайăк йăва çавăрмарĕ.
Пуçа турă ырлăха çырмарĕ -
Атте-анне пиллĕхĕ çитмерĕ.

Сирĕн урамăрсем кукăр-макăр -
Хĕн-тĕр унта утпа çӳресси.
Эсир лайăх, туссем, эпĕ начар -
Хĕн-тĕр сире манпа çӳресси.

Уярах та пулсан уйăха хĕн,
Пĕлĕтлĕ те пулсан куна хĕн.
Хамран чухрах çынтан сăмах илтсен,
Вĕрене çулçи пек чуна хĕн.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**


С.Манотер фотоэтюдĕ.

## Спорт * Спорт * Спорт * Спорт * Спорт

### Волейбол

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Нурлатра волейболла выляссипе



финал ăмăртăвĕсем иртрĕç. Командăсем нумай пулнипе икĕ ушкăна уйрăлса вылямалла тиврĕ: яшсем хулари 2-мĕш номерлĕ шкул бази çинче ăмăртрĕç, хĕрсем - ДЮКФПра.

Яшсенчен пĕрремĕш вырăна Тĕрнеçри шкул команди тухрĕ, иккĕмĕш вырăна якаелсем йышăнчĕç.

Хĕрсенчен 1-мĕшпе 2-мĕш шкулсен командисем пĕр-пĕринпе ăмăртрĕç. Икĕ команда та лайăх выляре, çапах та пĕрремĕш шкул спортсменкисем вăйлăрах та вăр-вартарах пулчĕç. Вĕсем чемпион ятне тивĕçрĕç.

Çĕнтерӳçĕсене парнесем пачĕç.

### Теннис

Апрелĕн 12-мĕшĕнче ДЮКФП спорт залĕнче районти шкулсем хушшинче сĕтел çинчи теннис вăййипе ăмăртусем пулса иртрĕç. Хулари шкулсенчен кунта 1-мĕш номерлĕ шкул спортсменĕсем çеç хутшăнчĕç, ялтисенчен



- Куракъел, Мамăк, Вăтам Хăмăшлă, Киклĕ, Тĕкĕрмел шкулĕсен представителĕсем. Командăсем хушшинчи ăмăртура пĕрремĕш вырăна Мамăк шкулĕн спортсменĕсем (тренерĕ Н.Н.Багаев) тухрĕç, иккĕмĕшне - 1-мĕш шкул (тренерĕ А.А.Климов), виççĕмĕшне - Куракъелĕнчи шкул спортсменĕсем.

Уйрăм ăмăртура А.Виссарионов çĕнтерчĕ, иккĕмĕш вырăна А.Борзов (1-мĕш шкул) тухрĕ, виççĕмĕшне - Мамăкри И.Епифанов.

Хĕрсенчен пĕрремĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Н.Багаевапа Я.Павлова йышăнчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те Мамăкран. Иккĕмĕш вырăнта - хулари 1-мĕш номерлĕ шкулти Т.Климова.

**Ф.САФИН,**
**ДЮКФП тренерĕ.**


*"Альянс" магазин (апат-çимĕç пасарĕ) тата "Елена" магазин (япала пасарĕ) кредитпа холодильниксем сутаççĕ, тĕрлĕ моделлĕ холодильниксем пур. Пурĕ 17 модель. Пĕр, икĕ, виç камерăллă сивĕтекен камерăсем - "Норд", "Стинол". Кĕпе-йĕм çумалли "Индезит", "Аристон" машинăсем, "Индезит", "Аристон" газ плитисем. Нурлатра, районта, кӳршĕ районсенче пурăнакансене тӳлевсĕр леçсе параççĕ. Гаранти 2 çул. Хаксем пасартинчен йӳнерех. Телефон: 5-41-19. Свидетельство Б-621.*

**Аксу вăрман хуçалăхĕ арболит блокĕсен 1 кубла метрне майăн 1-мĕшĕччен çеç 400 тенкĕпе сутать. Сыртарнă арболита вăрман хуçалăхĕн транспорчĕпе майăн 10-мĕшĕ хыççăн леçсе пама пултаратпăр. Никĕс блокĕсем, шăтăрнак, строительство вăрманĕ пур. Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 2-14-32, 2-11-92.**

* * *

**Строительство материалĕсен комбиначĕ бортлă ЗИЛ-130 автомашинăна бортлă УАЗпа улăштарать. Телефон: 2-10-49.**

**Çурт сутăнать. 11 сотка пахча пур. Телефон: 2-28-19.**

* * *

**Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-27-16.**

* * *

**Хуралтăвĕнчи çурт сутăнать. Якуркел ялĕнчи Владимир Кузьминран ыйтса пĕлмелле.**


# Ансамбль мĕн çинчен ĕмĕтленет?

Эсир ташланине, хальхи вăхăтри музыкăна, пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçма юрататăр-и? Апла пулсан, мĕнпур ĕçе пăрахăр та бал ташшин "Нурлат" ансамблĕн отчетлă концертне васкăр. Çак коллектив йĕркеленнĕренпе 30 çул иртнĕ ĕнтĕ, апла пулин те вăл çамрăк-ха, талантлă тата сăнавсем юратать. Ансамбльре 26 ташăçă, вĕсем, тĕпрен илсен, хулари аслă классенче вĕренекенсем - вĕсем тĕрлĕ ташăсене пурне те ăнăçлă ташлаççĕ.

Ансамбль Нурлатра пурăнакансене чĕнекен "Ташăсен шкулĕ" ятлă программа эстрада спектаклĕ евĕрлĕ пулĕ. Сценари авторĕ - А.Чеплаков, С.Николаев юрăсем шăрантарĕ.

Ансамбль мĕн çинчен ĕмĕтленет, пĕлетĕр-и? Тулли зал пуласса. Килĕр. Сире унта ăшшăн кĕтсе илĕç!

**Концерт районти культура çуртĕнче апрелĕн 27-мĕшĕнче, тунтикун, 19.00 сехетре пулать. Тӳлесе кĕмелле.**


***М.Б.Багрянцев врач***
***çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***
***Пирĕн патра кăна!***

***Сеанса пĕтĕмпех анонимлă irттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!***

***Сипленĕ кунсенче, эрнекун, апрелĕн 24, майăн 8-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу irттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.***


# Алимзян Мухаметзянович АЛЬКОВ

**1998 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче 75 çула кайса, йывăр чирленĕ хыççăн, "Нурлатнефть" НГДУ ветеранĕсен Совечĕн председателĕ Алимзян Мухаметзянович Альков вилсе кайнă.**

**Алимзян Мухаметзянович 1923 çулта июлĕн 25-мĕшĕнче Оренбург облаçĕнчи Тепловски районĕнчи Озерная ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă.**

**Унăн ĕç биографийĕ Тутарстанти Октябрь (Нурлат) районĕнче 7 класс пĕтернĕ хыççăн Кăрмăш ял Советĕнче пуçланнă.**

**1942 çултан тытăнса 1947 çулччен А.М. Альков вăрçă фрончĕсенче Тăван çĕршывăмăра хӳтĕленĕ, служба иртнĕ. Таврăнсан 23 çул хушши комсомол, парти ĕçĕнче вăй хунă. Хусанти аслă парти шкулне пĕтернĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарьне, пĕрремĕш секретарьне суйланă, 6 çул хушши КПСС Октябрь райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ пулнă.**

**1971 çултан Алимзян Мухаметзянович автопредприятире, автомобиль çулĕсен управленийĕнче хуçалăх ĕçĕнче вăй хунă.**

**1985 çултан тытăнса пенсие кайиччен А.М. Альков нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленире ĕçленĕ.**

**Вăл ăçта вăй хурсан та яланах компетентлăхпа, йĕркелĕхпе, ĕçченлĕхпе, хытă ыйтма пĕлнипе, çынсемпе принциплă та тимлĕ пулнипе палăрса тăнă.**

**А.М.Альков вăрçăра паттăрлăх кăтартнăшăн тата ĕçре ăнăçлăхсем тунăшăн патшалăх наградисене илме тивĕç пулнă: I тата II степень Отечественнăй вăрçă, "Хисеп Палли" орденсене, "Хăюлăхшăн", "Хастар ĕçленĕшĕн", "Ĕç ветеранĕ" медальсене тата ыттисене.**

**А.М.Алькова районта хисепленĕ, вăл çамрăксен ырă наставникĕ тата канаш паракан ĕ пулнă.**

**Тивĕçлĕ канура та организаци йĕркеленнĕ пĕрремĕш кунранах НГДУ ветеранĕсен Совечĕн председателĕ пулнă.**

**Алимзян Мухаметзянович Альковăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕрере сыхланса юлĕ.**

**Ф.С.СИБАГАТУЛЛИН, Ф.М.ДАВЛЕТШИН, Ю.В.ТЕРЕНТЬЕВ, Ф.Р.НОГУМАНОВА, А.Н.ЕЛЬЧЕНКОВ, Ф.М.ГАЛИМОВ, Н.Б.МУЛЮКОВ, Ф.Н.ГУБАЙДУЛЛИН, Р.Т.БИЛАЛОВ, М.М.ХУЗИН, И.У.ГИЛЯЗЕВ, И.М.ВАЛЕЕВ, Х.Х.САДЫКОВ.**


# Пĕлтерӳсем

***Фрунзе урамĕнчи 26-мĕш номерлĕ çурта сутатпăр е хушса тӳлесе икĕ пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштаратпăр. 5-12-39 телефонпа 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.***

* * *

***Çыранçи Чаллăри виçĕ пӳлĕмлĕ хваттере Нурлатри уйрăм çуртпа е çавăн пек хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Димитров урамĕ, 34.***

* * *

***Щитлă çурт комплекчĕ сутăнать. Телефон: 3-31-11 (килти), 2-19-76 (ĕçри).***

* * *

***"Альянс" магазин панă пĕлтерӳре, кăçалхи апрелĕн 15-мĕшĕнче пичетленсе тухнăскерте, телефон номерне тĕрĕс мар кăтартнă. Тĕрĕсси: 5-41-19.***

* * *

***КамАЗ 5320 сутăнать, 8 тонна, тентлană, çывăрмалли пур, бакĕ 800 литр, çĕнĕ резина. Телефонсем: 2-11-24 е 5-19-95.***

* * *

***Яшар Новрузович Тамарвердиев ячĕллĕ паспорта тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать. Адрес: Нурлат районĕ, Кивĕ Чаллă ялĕ.***

* * *

***1997 çулхи март уйăхĕнче туса кăларнă ВАЗ-21061 сутăнать. Телефон: 5-15-82.***

* * *

***Пахчаçăсен "Строитель" юлташлăхĕнче дача участокĕ, хура-шурă кăтартакан телевизор, пĕр çын çывăрмалли кравать сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 5-26-97.***

* * *

***Т-16А - çĕнĕ самосвал сутăнать. Телефон: 2-22-95.***

* * *

***Дача участокĕ сутăнать. Телефонсем: 5-14-26 (килти), 2-10-44 (ĕçри).***



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 859.